**Çĕрпу пасарĕ**

Эх! Çĕрпĕвĕн пасарĕ
Мĕн-мĕн кăна çук унта!
Кам каласа пĕтерес
Унта мĕн-мĕн пуррине.
Ăçта пăхнă - вăл тĕлте
Темĕн те пĕр сутаççĕ,
Сутуçисем хăвăртрах
Укçа çине путаççĕ.
Унта тырри-пуллисем,
Темĕн те пĕр япали;
Çуртне-йĕрне, ут тумне
Кирлĕ пулсан тумалли!
Лавĕ-лавĕ тăварĕ,
Вакки-твекки таварĕ,
Мĕскер кирлĕ пулсан та,
Парать Çĕрпÿ пасарĕ.
Хăшĕ кĕлти-кĕлтипе
Йĕке йăтса çÿреççĕ,
Хăшĕ чарăлтаттарса
Пусма тавар чĕреççĕ.
Унта чĕлĕш-чалăшĕ,
Ата-пушмак, калушĕ,
Сăран ата, кăçата,
Вата-вĕтĕ - пурте пур.
Тата выльăх-чĕрлĕхĕ,
Чăххи-чĕппи, вут-шанки,
Çĕрулмийĕ, панулми,
Купăстисем, хăярсем

Ларса кайнă пĕр майран
Таçта-таçта çитиччен,
Вĕçĕ-хĕрри таç тĕлтре
Çÿре-çÿре ывăнăн.
Унта пушăт-çăпати,
Чĕрес чавси, шăпăрĕ,
Çиппи-йĕппи-чĕнтĕрĕ,
Урăписем-çунисем,
Алси-чăлхи, милкисем,
Темĕн те пĕр мĕлкисем.
Сĕлли-тулли, урписем,
Ырашĕсем-вирĕсем,
Йĕтĕн-кантăр вăррисем,
Усалĕсем-ыррисем.
Вăхăчĕпе çырлисем,
Çависемпе çурлисем,
Лапаткисем, хăйрисем,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ мăйрисем.
Вăрмантисем, уйрисем,
Вырăсĕсем-майрисем.
Сунталĕсем-ункисем,
Йăмăкĕсем-инкисем,
Кĕнекисем-мĕлкисем,
Чăнкăр-чăнкăр тенкисем.
Апельсинĕ-лимонĕ,
Кăвасĕсем-сăрисем,
Писевĕсем-сăрĕсем,
Улмуççисем-хырăсем,
Акăш ушкăн евĕрлĕ
Курăнаççĕ хĕрĕсем.

Хăмач çиппи, шел çиппи,
Йăлтăр-ялтăр шăрçисем,
Тимĕр-тăмăр хурçисем,
Касмакĕсем-ырçисем,
Кункăрисем-арчисем,
Ясмăкĕсем-пăрçисем...
Мĕн япала пулсан та,
Пурин те пур хуçисем.
Хăмăчĕсем-сӳсменсем,
Ĕнерчĕксем-чĕнĕсем,
Чейникĕсем-чейĕсем,
Тăманисем-чейисем.
Пĕренисем-хăмисем,
Салачĕсем-хăмлисем,
Тăпаччисем-вуллисем,
Алçыххисем-суллисем.
Кантăрĕсем-пусисем...
Тантăшĕсем-тусĕсем,
Аçамĕсем-çăмĕсем...
Тĕрлĕ лапка çимисем,
Лаханĕсем-ларĕсем,
Тӳшек, минтер-çытарсем,
Çăкăр-тăвар-пĕлĕмĕ...
Тем-тем тĕслĕ чĕлĕмĕ.
Шĕшлийĕсем-вĕшлисем,
Купăсĕсем-кĕслисем,
Лашисемпе кĕрисем
Темĕн те пĕр тĕслисем,
Куçкĕскийĕ-куçлăхĕ,
Темĕн чухлĕ пуçлăхĕ.

Ашакĕсем-шаккисем,

Атмисемпе çатмисем.

Ирхи куна каçченех

Пăтă пекех çын вĕрет.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ халăхĕ

Пĕртăван пекех çӳрет.

Сутуçисем тирсене

Хӳрисенчен сĕтреççĕ.

Пĕр-пĕринчен ăмăртса

Йăпăр-йăпăр çӳреççĕ.

Хĕлле тумтир çӳхисем

Тăрăлтатса чĕтреççĕ,

Ай-ай паян пит сивĕ,

Тӳсме хал çук вĕт теççĕ.

Укçисене сумашкăн

Ал кăларма хăраççĕ,

Ме-ха, суса пар тесе

Çынсен умне хураççĕ,

Эх, Çĕрпĕвĕн пасарĕ,

Пурĕпĕрех пыраççĕ,

Пурăнăçа кирлине

Пурте унта шыраççĕ,

Çӳремĕччĕç чĕтресе –

Нушти тĕртет хыçĕнчен,

Ĕмĕр-ĕмĕр килекен

Меле çапла çут тĕнчен.

Эх, пурăнăç, пурăнăç,

Темиçене пăрăнăç,

Хăшне тилĕ тăлăпĕ,

Хăшне алăк хăлăпĕ.

Унта кĕпи-йĕмне те
Йăта-йăта çӳреççĕ.
Хăшĕ-хăшĕ сыснине
Нăрик-нăрик сĕтреççĕ.
Услам çăвĕ, сар çăвĕ,
Сĕт-турăхĕ-чăкăчĕ,
Чăххисемпе çмартисем,
Хăва хулли арчисем.
Унта ашсем, какайсем,
Хĕри-пăраç-акайсем,
Карчăк-кĕрчĕк, мăн çынсем,
Çĕнĕ çынсем, кив çынсем.
Пуракĕсем, турисем,
Вĕт-шак сысна çурисем,
Тир-тĕрĕсем, чирĕсем,
Ылтăн-кĕмĕл çĕрĕсем.
Çарăкĕсем, кăшмансем,
Кавăнĕсем, тынĕсем...
Чĕрес-чĕрес лараççĕ
Темĕн чухлĕ пылĕсем.
Тата чӳлмек-чашăксем,
Тилкеписем-пушшисем,
Тухья-хушпу тăхăннă
Иăлтăр-ялтăр пуçĕсем,
Кăвакалсем-хурĕсем,
Иккунăсем-турăсем.
Сарăсемпе хӳресем
Тем те куран çӳресен.
Унта чăпти-мунчали,
Çыххипеле кунчали,

Кунтисемпе кăмписем...
Йăхăл-йăхăл кулнисем,
Темĕн те пĕр пуплени,
Пĕр-пĕрне ӳкĕтлени.
Вăрттăн-вăрттăн итлени,
Кирлĕ маршăн питлени.
Тупăшĕсем-сиенсем,
Чухăнĕсем-пуянсем...
Пăсарисем-сăсарсем,
Мулкачăсем-куянсем.
Çамрăкĕсем çав тĕрлĕ
Пĕлĕт юхнă евĕрлĕ,
Ушкăн-ушкăн юхаççĕ,
Хире-хирĕç çаврăнса,
Йăл-йăл кулса пăхаççĕ.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеç пек,
Пĕрмай чĕвĕлтетеççĕ,
Хăшĕ хĕвелçаврнăшĕ,
Хăшĕ мăйăр катаççĕ.
Çĕмĕрт чечек евĕрлĕ,
Куçа шартса яраççĕ,
Ывăçсемпе пĕр-пĕрне
Темĕн те пĕр параççĕ.
Унта йăтса çӳреççĕ
Темĕн те пĕр кив-кирĕк,
Çĕнĕ кĕрĕк, кив кĕрĕк,
Пӳремечи-куклийĕ.
Улми, пыл пек, тутлийĕ.
Меек-мек! кăшкăраççĕ
Качакисем-такисем,

Пăхсан мĕлке курăнать
Лапаткисем-акисем.
Шăрик-шăрик шăхличĕ
Кăштăртаççĕ ачисем,
Чăкăрт-тăкăрт тăваççĕ
Урисенче аттисем.
Сухи-плугĕ-сӳрисем,
Шăртсем, тиха хӳрисем,
Хурт сырнă пек кĕрлеççĕ
Пасарăн чан хĕрĕвĕсем.
Пĕрне-пĕри тулакан
Буржуйсенĕн сĕрĕмсем.
Калпакĕсем-çĕлĕксем,
Кĕрĕкĕсем-тăлăпсем,
Сурпанĕсем-масмаксем,
Тĕкĕ-çӳçĕ, мамăксем.
Сăмаварĕ, хунарĕ,
Тем чул сутуç тутарĕ
Чăваш халăх хăватне
Хусаналла шутарĕ.
Тата çĕтĕк-çатăкĕ.
Темĕн те пĕр татăкĕ,
Пир-авăр, капăрĕ,
Пуртти-çĕççи, пакăрĕ.
Унта мăксем-утисем,
Çӳхе тутлă тутисем,
Вут пек çунса таракан
Пурçăнĕсем, укисем.
Чăнкăр-чăнкăр тенкисем,
Çутă кĕмĕл укçисем,

Мул пулсассăн, пурте пур,
Чухăнсенче çук вĕсем.
Кутне-пуçне сиктерсе
Кĕçенеççĕ ăйрисем,
Кĕлтен-кĕлтен выртаççĕ
Çыххипеле хуйрисем.
Ĕни те пур, вăкри те,
Йĕтĕн çиппи хутри те, -
Хĕвел пек çунса тракан
Тĕрлĕ пурçăн тутри те.
Йăшăлтатать кăткă пек
Кунĕпеле халăхĕ.
Пухăннă чух пухăнать,
Чисти пĕлĕт юхнă пек,
Хăш çул çине пăхсан та,
Вĕçĕ-хĕрри пĕртте çук.
Саланнă чух çавнашкал
Пăр кайнă пек хускалать.
Сутуçи те лапкинче
Урлă-пирлĕ кускалать.
Хăш еннелле пăхсан та,
Татти-сыппи курăнмасть,
Пырать пăр пек кĕрлесе,
Никамран та пăрăнмасть.
Тĕпĕр-тĕпĕр ут ури,
Пĕр-пĕринчен ир теççĕ,
Хыçĕсенчен хуçисем
Пушăпала хĕртеççĕ.
Ури утан, куç куран,
Пурте пынă пасара,

Хĕсĕнсе те тухас çук
Çын хушшинчен хăш чухне
Сырса илет кăткă пек
Пасар Çавал улăхне,
Çул çийĕнче çул парса
Пĕтерес çук халăхне.
Савăлпала хĕснĕ пек,
Тĕртсессĕн те сирĕлмест,
Каçалана каймасăр,
Кунĕпеле сÿрĕлмест.
Хура ури, шур ури,
Хура пуçĕ, шур пуçĕ
Хурт уйăрнă вăхăт пек
Кĕрлет вара кунĕпе
Вĕри юнлă чунĕпе.
Савать Çĕрпÿ пасарне
Пĕтĕм чунпе, чĕрипе,
Ыран пасар тесессĕн
Çывăрмасть пуль çĕрĕпе.
Пурлă-çуклă мулĕпе
Çÿрет унтаваскаса,
Пырать Çĕрпÿ пасарне
Часран-часах хашкаса.
Пурте мĕн те пулсассăн
Суту-илÿ тăвасшăн,
Ирттереççĕ пасарне
Тÿлек кун пек йăвашщăн,
Тем пысăккĕш савăнăç
Пулать пасар чăвашшăн.
Эх, Çĕрпĕвĕн пасарĕ,

Мĕн-мĕн кăна çук унта!

Кам каласа пĕтерес

Унта мĕн-мĕн пуррине.

*Шелепи, Н. Çĕрпӳ пасарĕ : [сăвă] / Н. Шелепи // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 71-74.*